Муркаш район хаҫачĕ

# Ҫĕнтерÿ ялавĕ

1944 ҫулхи ҫу уйăхĕн 5-мĕшĕнченпе тухать

32 (7775) № * Эрне кун, 2010 ҫулхи ака (апрель) уйăхĕн 30-мĕшĕ * Хакĕ ирĕклĕ

Ыран – Ҫуркуннепе Ĕҫ уявĕ

## Ĕҫленĕ хыҫҫăн савăнма та кăмăллă



*Ҫуркуннене тирпейилемпе кĕтсе илессипе ĕҫ коллективĕсем кăна мар, шкул ачисем те кашни ҫулах активлăх кăтартаҫҫĕ. Акă Ильинкăри пĕтĕмĕшле пĕлÿ паракан вăтам шкулта вĕренекенсем те Ҫуркуннепе Ĕҫ уявĕччен шкул территорине тăрăшсах тирпейлерĕҫ. Ҫак уяв ҫут ҫанталăк чĕрĕлсе вăй илнипе тата ĕҫпе ҫыхăннине аван ăнланаҫҫĕ ачасем. Ваттисем «Ĕҫ – пурнăҫ тыткăчи» тесе каланине хăйсен вĕренекенĕсенчен часчасах илтеҫҫĕ вĕсем. Ҫакăнпа килĕшсе ĕҫрен хăрамасăр, ăна хăнăхса, ҫав вăхăтрах ҫут ҫанталăка упрама вĕренсе ÿсеҫҫĕ. Тăрăшулăхпа пултарулăх кăтартса пĕрле вăй хурсан, уявра савăнма та кăмăллă.*

**И. КАРГИН**
**сăн ÿкерчĕкĕ.**

**ХИСЕПЛĔ ЕНТЕШСЕМ!**

Сире Ҫуркуннепе Ĕҫ уявĕ ячĕпе саламлатăп!

Майăн 1-мĕш кунĕнчи пĕтĕм халăх уявĕ ҫĕнĕ шанăҫсем ҫуралнине, пĕр-пĕрне пулăшма кирлине, тачă ҫыхăнура тата пĕрлĕхлĕ пулмаллине, историпе халăх пурнăҫ тачă ҫыхăнура пулма кирлине пĕлтерет.

«Хаваслă ĕҫ – чун канăҫĕ»,– тенĕ авалах. Чăваш Ен ҫыннисем уйрăмах ĕҫе юратнипе, кирек епле ĕҫе те чунпа пурнăҫлама хăнăхнипе, пур вăй-хала пĕрле пухса кирек епле задачăна та татса пама пултарнипе палăрса тăраҫҫĕ. Ҫине тăнипе, энтузиазм пысăк пулнипе тата палăртнă тĕллевсем патне ăнтăлнипе те ĕнтĕ республика малалла ҫирĕппĕн утать. Кашни ялах ҫут ҫанталăк газне ҫитерне, кашни ял патнех автомобиль ҫулĕсем сарнă. Ҫĕнĕ урамсем ҫĕкленеҫҫĕ, хальхи шкулсем туса лартнă, тĕнче класлă оборудованипе тивĕҫтернĕ пĕтĕмĕшле практика врачĕн офисĕсене, тĕслĕх библиотекăсене, физкультурăпа спорт комплексĕсене уснă.

Ҫурхи ҫак пысăк уяв кунĕнче ĕҫ династийĕсене чыслаҫҫи йăлана кĕнĕ. Ҫемье, унăн нравственнăҫ тата ĕҫ тивĕҫлĕхĕсем мĕн чухлĕ ҫирĕпрех, пирĕн Чăваш Ен те ҫавăн чухлĕ ăнăҫлăрах аталанса пырĕ. Халĕ вара пирĕн ырă шанăҫсене пурнăҫа кĕртме, ăнăҫупа тăнăҫлăх кашни киле килчĕр тесе сахал мар тăрăшма тивет-ха.

Ҫавна шанса тăратăп. Эпир пĕрле пулса татах пысăкрах ҫитĕнĕҫсем ҫĕнсе илме пултарăпăр. Сире ҫирĕп сывлăх, лайăх кăмăл-туйăм, телей тата юрату сунатăп!

**Н. ФЕДОРОВ,**
**Чăваш Республикин Президенчĕ.**

**МУРКАШ РАЙОНĔН ХИСЕПЛĔ ҪЫННИСЕМ!**

Сире пурне те Ҫуркуннепе Ĕҫ уявĕ ячĕпе пĕтĕм чун-чĕререн саламлатăп. Ҫуркунне ҫут тĕнче чĕрĕлсе вăй илнĕ май эпир пурте шанчăкпа ҫунатланатпăр, хамăрăн пурнăҫ татах та лайăххланасса ĕненетпĕр. Шухăшлани пурнăҫа кĕтĕр тесен вара пирĕн пĕр-пĕрне ăнланса, пĕр тĕллевпе ĕҫлемелле. Малашне те, йывăрлăхсене ҫĕнтерсе пырса, палăртнине пурнăҫлассишĕн ҫунса тăмалла. Вара районăмăр пуянрах та илемлĕрех пулĕ. Ҫĕр-шывăмăр та татах вăйлăрах, ҫынсен пурнăҫĕ тулăхрах пулĕ.

Пурсăра та ҫирĕп сывлăх, ĕмĕт-тĕллевĕре пурнăҫа кĕртме тулли кăмăл, иксĕлми вăй-хал, ăнăҫу сунатăп. Ҫемйĕрсенче килĕшÿпе тату пурнăҫ хуҫалантăр. Ĕҫĕрсем ăнсах пыччăр.

**Район пуҫлăхĕ Ю.А. ИВАНОВ.**

Паян – Пушар хуралĕн кунĕ

**ПУШАР ХУРАЛĔН ХИСЕПЛĔ ĔҪЧЕНĔСЕМ ТАТА ҪАК ĔҪĔН ВЕТЕРАНĔСЕМ!**

Сире пурне те професси уявĕ ячĕпе чун-чĕререн саламлатăп.

Ҫав тери пархатарлă, анчах ҫăмăл мар сирĕн ĕҫ. Уйрăм ҫыннăн, патшалăх пуянлăхĕ вут-кăварта ан пĕтĕр тесе хăвăртан килнине йăлтах тăватăр. Вут-кăвартан сыхланас тĕллевпе профилактика ĕҫĕсене пурнăҫлатăр. Инкек килсе ҫапсан вара ҫулăмпа кĕрешетĕр, ҫынсен пурнăҫне, пурлăха ҫăлатăр. Тавах сире ҫакăншăн. Районăн пурнăҫĕнче, унăн аталанăвĕнче сирĕн ĕҫ пĕлтерĕшĕ вырăн йышăнать. Эсир малашне те пушар хăрушсăрлăхĕшĕн ырми-канми тăрăшасса, професси тĕлĕшĕнчи пултарулăха ÿстерсе пырасса шанса тăратăп.

Сире пурне те ҫирĕп сывлăх, вăрăм кун-ҫул, телей сунатăп. Ăнăҫу ĕҫлес кăмăлăра ÿстерсех тăтăр. Ҫывăх ҫыннăрсем сире яланах ăнланччăр, вăй парса тăччăр.

**Район пуҫлăхĕ Ю.А. ИВАНОВ.**

Районăн паллă ҫыннисем

## Паллă вăрманҫăн юбилейне хатĕрленсе

Бронислав Ильич Гузовскин вăрманҫă пирĕн районшăн пысăк ĕҫ туни ҫинчен хаҫатăн иртнĕ номерĕсенчен пĕринче ҫырнăччĕ ĕнтĕ. Майăн 5-мĕшĕнче вăл ҫуралнăранпа 150 ҫул ҫитет. Гузовскин 150 ҫулхи юбилейне хатĕрленсе иртterme район администрацийĕн пуҫлăхĕн йышăнăвĕпе килĕшÿллĕн йĕркелĕ комитетне туса хунă, ятарлă ĕҫ планне ҫирĕплетнĕ. Унпа килĕшÿллĕн Ильика ял тăрăхĕнчи чăваш юманлăхĕсен чи аслă юманĕ тавра, ку тăрăхри ялсене тирпей-илем кĕртес ĕҫсем пыраҫҫĕ. Иртнĕ ҫул унăн тухса кайнă тымарĕсене тăпрапа хупласа хăварчĕҫ, йĕритавра карта тытрĕҫ. Ильинка ял тăрăхĕн пуҫлăхĕ Ю.В. Перцев каланă тăрăх, ҫак ват юман тавра та, обелиск умне те кăҫал чечексем лартма хатĕрленеҫҫĕ. Муркашри ял тăрăхĕсем хушшинчи библиотека Бронислав Гузовский пурнăҫĕпе ĕҫĕ-хĕлĕ ҫинчен каласа паракан буклет хатĕрлет. Районти библиотекăсенче паллă вăрманҫăна халалланă тематика куравĕсем, шкулсенче Чăваш Енри вăрмансемпе паллашма май паракан пĕлÿ сехечĕсем иртеҫҫĕ. Ильинка шкулĕнче Гузовскин музейĕ ĕҫлеме пуҫламалла, «Б.И. Гузовский – ученăй – вăрманҫă» электронлă презентаци иртмелле. Кунти библиотекăра Бронислав Ильичăн пурнăҫĕ ҫинчен каласа паракан экспозици уҫăлать. Ҫавăн пекех район хаҫатĕнче, радиопа Гузовский ҫинчен каласа паракан кăларăмсем пулчĕҫ, район администрацийĕн сайчĕ ҫинче ятарлă баннер йĕркеленĕ.

Ҫак кунсенче Гузовскин юбилейне хатĕрленсе иртерес ĕҫ ыйтупа Чăваш Республикин Ҫут ҫанталăк ресурсĕсен тата экологи министерствин вăрмансемпе уҫă курас, ҫĕнетес тата патшалăх вăрман реестрĕн пайĕн пуҫлăхĕн ҫумĕ А.А. Калегин тата «Опытлă вăрман хуҫалăхĕ» патшалăх учрежденийĕн ертÿҫи А.П. Яковлев килчĕҫ. Вĕсем район администрацийĕн пуҫлăхĕн ҫумĕпе – культура тата архив ĕҫĕсен пайĕн пуҫлăхĕпе А.Е. Андреевапа, Ильинка ял тăрăхĕн пуҫлăхĕпе Ю.В. Перцевпа тата Ильинка тата Муркаш лесничествин лесничийĕпе А.К. Касьяновпа, лесничествăн ĕҫченĕсемпе пĕрле ҫав ватă юман, Гузовскин обелискĕ, унăн усадьбиларнă вырăнта, Бронислав Ильич юман культурисене лартса ҫитĕнтернĕ лаптăксенче, Ильинка шкулĕнчи Гузовскин пулас музейĕнче пулса курчĕҫ. Аркадий Аверкиевич вăрманҫăн юбилейне халалласа иртterекен республикăри наукăпа практика конференцийĕн кун йĕркипе паллаштарчĕ. Майăн 13-14-мĕшĕсенче иртмелле вăл. Пĕрремĕш кун уява хутшăнакансем Шупашкарта ҫак наукăпа практика конференцийĕн ĕҫне хутшăнаҫҫĕ пулсан, иккĕмĕш кунне пирĕн района килсе Гузовские халалласа иртterекен мероприятие хутшăнаҫҫĕ, халь ҫеҫ асăннă Ильинка вăрманĕнчи паллă вырăнсенче пулса кураҫҫĕ.

**Л.ПАВЛОВА.**



## Аслă Ҫĕнтерÿччен 9 кун юлчĕ!

Ҫур аки

## Нÿрĕк хупласҫĕ, апатлантараҫҫĕ, акаҫҫĕ

Ĕнерхи кун тĕлне ҫурхи тĕш тырă культурисен вăрлăхĕсене 524 тонна (18,8 процент) имҫамланă. 100 процентпех ҫак ĕҫе Чкалов ячĕпе хисепленекен хуҫалăхра кăна пурнăҫланă.

Ҫĕр улмине 4580 тонна суйласа яровизацилеме хумалла пулсан, 2790 тонна яровизацилеме хунă. Ку ĕҫе вĕсленисен шутĕнче «Восток», Ленин яч. хис., «Свобода», Чапаев яч. хис. хуҫалăхсем, «ВаСем» ООО, С.К. Сретинскийăн, А.И. Толстовăн хресчен (фермер) хуҫалăхĕсем.

Кĕрхи культурăсене 1024 гектар (38,6 процент) минераллă удобренисемпе апатлантарнă, ҫавăн чухлех сÿрелесе нÿрĕке хупласа хăварнă.

Нумай ҫул ÿсекен курăксене 4933 гектар (51 процент) сÿреленĕ, 2057 гектар (21,3 процент) минераллă удобренисемпе апатлантарнă.

Ҫĕртме пуссисене 3416 гектар (42,5 процент) сÿреленĕ.

Ҫур аки иртterme культивацилесе 2139 гектар (19 процент) ҫĕр хатĕрленĕ, ҫур аки ĕҫĕсене 595 гектар ҫинче (7,9 процент) туса иртternĕ.

Депутатсен районти Пухăвĕ

## Черетсĕр лару

Апрелĕн 29-мĕшĕнче райадминистрацин ларусен залĕнче депутатсен районти Пухăвĕн черетсĕр 40-мĕш ларăвĕ ĕҫлерĕ.

Ларăва Пуху пуҫлăхĕ И.В. Николаев ертсе пычĕ.

Депутатсем кун йĕркинчи ыйтусене сÿтсе явса районăн 2009 ҫулхи бюджетне пурнăҫлани ҫинчен отчет ҫирĕплетрĕҫ, районăн 2010 ҫулхи бюджетне улшăнусем кĕртрĕҫ, районăн 2010 – 2012 ҫулсенчи экономикăпа социаллă пурнăҫ аталанăвĕн програмине йышăнчĕҫ, пурăнмалли мар ҫурт-йĕре арендăна парас тата ытти ыйтусене пăхса тухрĕҫ.

Лару ĕҫне район пуҫлăхĕ Ю.А. Иванов хутшăнчĕ.

Юбилей

## Саламлатпăр

Хаклă та юратнă ҫыннăмăра – Чамăш ялĕнче пурăнакан **Любовь Федоровна МОРОЗОВĂНА** 55 ҫул тултарнă ятпа ăшшăн саламлатпăр.



Сывлăху сан ҫирĕп пултăр, кун-ҫул вăрăм та телейлĕ килтĕр, сĕтелÿ ҫăкăр-тăвартан ан татăлтăр, кĕрекÿ тăвансемпе пуян пултăр.
Юрататпăр эпир сана,
Хисеплетпĕр тăвана.
Сывлăх пултăр яланах,
Тур пулăштăр пурăнма.

**Саламлаканĕсем: ачисем, ҫывăх тăванĕсем.**



Хаклăран та хаклă, юратнăран та юратнă аттепе аннене, Мулкачкасси ялĕнче пурăнакан **Зоя Митрофановнăпа Юрий Мефодьевич СМЕЛОВСЕНЕ** ылтăн туй ячĕпе саламлатпăр.

Вăрăм кун-ҫул, ҫирĕп сывлăх, иксĕлми телей сунатпăр. Сире хисеплесе ҫĕре ҫити пуҫ таятпăр, эсир пурришĕн Турра тав тăватпăр.

**Саламлаканĕсем: 6 хĕрĕ, кĕрĕвĕсем, 12 мăнукĕ, 1 кĕҫĕн мăнукĕ, ҫывăх тăванĕсем.**

Ҫырăнтару – 2010

**Хаклă вулакансем!**
**Районти «Ҫĕнтерÿ ялавĕ» хаҫата 2010 ҫулхи иккĕмĕш ҫур ҫулта илсе тăма унченхи хакпах ҫырăнтараҫҫĕ. Ултă уйăха ҫырăнмалли хак – 191 тенкĕ те 70 пус.**
**Яланах пĕрле пулар!**

**Райхаҫат редакцийĕ.**